Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчен пе тухать

14 (8080) № ✻ Юн кун, 2013 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Малашлăха пăхакансем çĕннине шыраççĕ

«Çĕр улми – 2013» выставкăран

*Нарăс уйăхĕн 21 – 22-мĕшĕсенче Шупашкарта Николаев ячĕллĕ урамра вырнаçнă ял хуçалăх пасарĕнче регионсем хушшинче 5-мĕш хут ирттернĕ «Иккĕмĕш çăкăр» выставки ĕçлерĕ. Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир «Çĕр улми – 2013» выставкăна хутшăннă «Ударник» хуçалăхри çĕр улми лабораторийĕн ертӳçине тата агронома Марина Романовăна Надежда Ярухина специалистпа (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) куратăр.*

*– Выставка-ярмăрккăна пурĕ 78 сорт илсе тухрăмăр. Çапла туса эпир хамăр мĕнле сортсем туса илессипе ĕçленине, хăш сортсене паян суту-илĕве кăларнине кăтартрăмăр. Икĕ кун хушшинче вунă тонна ытла паха сортлă çĕр улми сутрăмăр. Уйрăмах «Удача», «Невский», «Жуковский ранний», «Бриз», «Любава», «Лилея» сортсем ăнăçлă сутăнчĕç, – терĕ выставка ĕçĕпе кăмăллă юлнă агроном.*

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.




Чăваш Ен Пуçлăхĕн Çырăвне сӳтсе яватпăр

## Хамăр çине ытларах шанăç хумалла

***Февралĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика парламенчĕн иртнĕ вуннăмĕш сессийĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тата халăх патне яракан «Тăван ен ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлер, саккуна пăхăнса, таса чунпа пурăнар» Çырăвĕпе тухрĕ. Çырура иртнĕ çулхи ĕçсене тишкерсе хак панă, умра тăракан малашлăх задачисене палăртнă. Çак кунсенче Çырăва уйрăм çынсем те, ĕç коллективĕсенче те анлăн сӳтсе яваççĕ. Мĕншĕн тесен унта палăртнă малашлăх задачисем пирĕнтен кашнинех пырса тивеççĕ.***

***Республика Пуçлăхĕн Çырăвĕ пирки хăйĕн шухăшне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав ТИМОФЕЕВ пĕлтерме кăмăл турĕ:***

– Хăйĕн çулленхи Çырăвĕнче Михаил Васильевич пур сферăри иртнĕ çулхи ĕçсене тишкерсе хак пачĕ, малашлăхра хамăр умра тăракан задачăсем çинче чарăнса тăчĕ. Тĕп шухăш çакăнта. Республикăра хальхи вăхăтра пулса иртнĕ тата пулса иртекен ырă улшăнусем сахал мар. Апла пулин те Чăваш Енре пурăнакан кашни çыннăн пурнăç условийĕсене малашне те лайăхлатса пырасси, унăн пахалăхĕ тĕп вырăнта пулма тивĕç. Çак задачăна татса парассишĕн вара кашнийĕнех çине тăрса тата чуна парса ĕçлемелле. Ку вăл пĕтĕмпех хамăршăн пулнине манма кирлĕ мар.

Бюджет укçи-тенкине тĕллевлĕ, пĕлсе усă курасси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Ку енĕпе заказчиксен пĕрлехи служби туса хуни пысăк усă памалла. Ăна хамăр района та йĕркелерĕмĕр ентĕ. Бюджет укçи-тенкине патшалăх тата муниципалитет заказĕсен тытăмĕ урлă тăкакласси йĕркелени эффективлă мел пулса тăни паллă. Патшалăх заказĕсене аукцион кăтартăвĕсем тăрăх вырнаçтарасси, ĕçсене контракт мелĕпе йĕркелесси вăй илсе пыраççĕ. Ку енĕпе малашне те çине тăрса ĕçлемелле. Çапах та ку е вăл ĕçе ячĕшĕн тенĕ пек пурнăçлассинчен хăпас пулать. Ахальтен мар ĕнтĕ республика Пуçлăхĕ «…конкурс требованийĕсене тата та çирĕплетмелле, контрактсене пит шанчăклăх мар пурнăçлакансемпе тăвас йăлана пăрахăçламалла» тесе палăртрĕ. Кун пек тĕслĕхсем вара пирĕн патра та çук мар-ха. Сăмахран, Муркашра лицей çуртне реконструкци тăвакан подрядлă строительство организацийе те çаван пеккисен шутнех кĕртмелле.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

## Ял çыннисене пырса тивекен ыйтусемпе

**Пурнăç хăвăрт улшăнса тăрать. Пирĕн ялти пурнăç малалла хăш енне сулăнасси, ĕçе малалла епле майлаштарса пырасси вара выранти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен нумай килет. Иртнĕ ытлари кун Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне туха ирттернĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсен канашлăвĕнче те пурнăçпа тан утса пыма пулăшакан ыйтусенех пăхса тухрĕç. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ертсе пычĕ.**

Пластикран чӳрече рамисем тăвакан «Карина» предприятие çитсе курнă хыççăн пуçланнă канашлура чи малтан Çĕмĕрлере вырнаçнă 8-мĕш номерлĕ Федераллă налук службипе тачă çыхăнса ĕçлес ыйтăва пăхса тухрĕç. Муркаш районĕ халĕ шăпах унта кĕрет. Шухăша мала тăсиччен çакна каласа хăвармалла, малтан налук инспекцийĕ вырнаçнă çуртра Çĕмĕрлери асăннă учрежденин специалисчĕсем ĕçлет. Çавăнпа та вăл е ку ыйту интереслентерет пулсан сире кунта хапăл тусах кĕтеççĕ. Ял çыннисен хăйсен ыйтăвĕсемпе аякри çула тухмасăрах ыйтусене татса пама майсем мĕнле пулнă, çаплах юлнă.

Канашлура вара асăннă налук инспекцийĕн ертӳçи Т. Таранова ял çыннисен пурлăхшăн, çĕршĕн тата транспортшăн налук тӳлемелли йĕрки çинче чарăнчĕ. Çакна палăртрĕ. Камăн мĕн чуль налук тӳлемеллине Çĕмĕрлере шутлаççĕ те вĕсене тĕп базăна кĕртсе çав списока Чулхулана тĕп центра ярса параççĕ. Чулхулаpан вара ял çыннисен патне вĕсен мĕнле налука мĕн чухлĕ тӳлемеллине кăтартакан хут килет.

– Енчен те çав хутсене ял çыннисен илмен тĕслĕхсем пулаççĕ пулсан, пирĕн айăп çук. «Раççей почтин» почта уйрăмĕсенчен ыйтмалла. Мĕншĕн тесен тӳлемелли хутсене шăпах почтăпа ярса паратпăр, – терĕ.

Çав налук тӳлемелли квитанцие илсен вара çынсен киле килсе кам та пулсан вĕсенчен налук пуçтарса каясса кĕтмелле мар (кун пекки пулмасть), налука вăхăтра тӳрех тӳлемелле.

Кун пек хутсене кĕтсе тăрас килмесен хăвăрăн мĕн чуль налук тӳлемеллине Интернетпа пĕлме пултаратăр. Хăвăрăн ИНН номерне çыратăр та хуравĕ пулать те.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Республикăра

## Кулленхи ыйтусем тавра

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе тунти кун канашлу ирттернĕ.

Çулсем çинчи аварисенче инкек тӳснисене медицина пулăшăвĕ кӳрессипе çыхăннă ĕçе тишкернин кăтартăвĕсемпе вице-премьер – сывлăх сыхлавĕн министрĕ А. Самойлова паллаштарнă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх – «трасса» медицинин çĕнĕ модельне ĕçе кĕртни васкавлă медпулăшу бригадисем инкек пулнă вырăна хăвăртрах çитессине тивĕçтерме май панă. Çав вăхăтрах пĕлтĕр аварисен шучĕ висĕм çулхинчен 14,5 проц. ӳснĕ. Вĕсенче 265 çын вилнĕ, 2,9 пине яхăн çын суранланнă.

Вĕренӳ министрĕ В. Иванов ачасене пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учреждениесене йышăнасси пирки каланă. Çитес вĕренӳ çулĕнче республикăра 1-мĕш класа 13 пин ытла ача каймалла. Территорисене пайăр шкулсем тăрăх пайланă. Пултарулла ачасемпе ĕçлессине лайăхлатас тĕллевпе гимназисемпе лицейсен 5-мĕш тата 10-мĕш класĕсене ачасен хушма йышне йышăнасси пирки пĕлтернĕ – вĕсен çирĕплетсе панă территорисем çук. Çав вăхăтрах халиччен çав учреждениесенче пĕлӳ илнĕ 1 – 4-мĕш классем вĕренĕве унтах малалла тăсĕç.

Шупашкарта иртнĕ «Çĕр улми – 2013» курав пĕтĕмлетĕвĕсемпе ял хуçалăх министрĕн çумĕ Э. Александров паллаштарнă. Унта 5000 çын ытла пырса курнă. Куравра çĕр улмин 160 сорчĕпе, ăна çитĕнтерме усă куракан техникăн 51 единиципе паллаштарнă. Унта хутшăннисен йышĕнче Раççейĕн 31 регионĕн представителĕсем пулнă. 2 кун хушшинче хуçалăхсем вăрлăхлăх 40,5 тата çимелли 2,3 тонна çĕр улми сутнă. «Иккĕмĕш çăкăртан» хатĕрленĕ 200 ытла блюдо пулнă май Чăваш Ен Пуçлăхĕ вĕсене анлăрах рекламăламаллине палăртнă.

## РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

### Сире нумай функциллĕ центр пулăшать

Район администрацийĕнче нумай функциллĕ центр халăха йышăнма пуçларĕ. Асăннă центр патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе уйрăм çынсене, юридически сăпатсене «пĕр чӳрече» мелĕпе тивĕçтерет. Кунта килнĕ çынна тивĕçлĕ консультаци параççĕ, документсене йышăнаççĕ. Палăртнă вăхăтра унăн хатĕр документсем илме килмелле. Нумай функциллĕ центр кăткăс, документпа справка пухасси вăрах тăсăлакан ыйтусемпе йышăнать: çĕр арендин килĕшĕвне тăвасси, çĕр лаптăкĕн суту-илӳ килĕшĕвне йĕркелесси, çĕр лаптăкĕн тĕллевне улăштарасси, муниципаллă пурлăх реестрĕнчен çырни. Халĕ вара кунти ĕç-хĕл анлăланса пынă май центр тепĕр тĕрлĕ пулăшу сĕнет: çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмаллисен шутне кĕртнĕ çамрăк çемьесене çурт-йĕр туянма (тума) социаллă тӳлев валли свидетельство парасси.

Центр ĕçченĕсем район çыннисене кĕтеççĕ, услугăпа тивĕçтересси пирки тĕплĕнрех 62-3-15 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

### Пултарулăхпа паллаштарчĕç

Районти пултарулăх ушкăнĕсем хушшинчи «Чечеклен, юратнă Муркаш ен» фестиваль-конкурс малалла пырать.

Исетеркке ял клубĕнче халăх йышлăн пухăнчĕ. Кунта Чуманкассинчи информаципе культура центрĕн отчетлă ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма май килчĕ. Сцена çинче кĕçĕн ăрурисем те, аслă ăрурисем те хăйсен пултарулăхĕпе тыткăнларĕç. Исетерккĕсем вара «Тăна кĕртрĕç арăмсем» спектакль лартрĕç.

Графикпа килĕшӳллĕн Уйкас Янасал тата Турай ял тăрăхĕсенчи пултарулăх ушкăнĕсем те хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарчĕç.

### Бокс кĕрешӳвĕсене çитсе курăр

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн***

Республика шайĕнчи бокс ăмăртăвне февралĕн 28-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче савăнăçлă лару-тăрура 15 сехетре уçасси пирки хаçатăн иртнĕ номерĕнче пĕлтернĕччĕ. Муркашри ринг çинче çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене ăсталăха ӳстерекен çамрăк боксерсене те, ят-сум çĕнсе илме пултарнисене те курма май пулĕ.

Тунти кун çак пысăк ăмăртăва ирттерессипе йĕркелӳ комитечĕ канашларĕ. Муркашсем ăмăрту ирттерме хатĕр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА, Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

# Хамăр çине ытларах шанăç хумалла

**Чăваш Ен Пуçлăхĕн Çырăвне сÿтсе яватпăр**

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Выранти хăй тытăмлăх органĕсен хăш-пĕр муниципалитет пĕрлĕхĕсене пĕрлештерсе пысăклатасси çинчен те калани пулчĕ Çырура. Кунта сăмах ял тăрăхĕсене, районсене сывăх вăхăтрах çине тăрса пĕрлештерме тытăнасси пирки пымасть тесе шутлатăп. Чи малтанах ку вăл районсемпе вĕсен территорийĕнчи хула администрацийĕсене пĕрлешессине пырса тивмелле.

Çапах та çак çĕнĕлĕх выранти хăш-пĕр ял тăрăхĕсене пырса тивмĕ тесе те калама çук. Енчен те ял тăрăхĕ пысăк мар, администраци хăйĕн функцийĕсене кирлĕ пек пурнăçласа пыраймасть, йĕркеллĕ лайăх кадрсем çук пулсан ăна çирĕпрех ял тăрăхĕпе пĕрлештересси пирки те ыйту çуралма пултарать. Хальлĕхе пирĕн районшăн ку ыйту çивĕчех тăмасть тейĕпĕр. Çапах та ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен шухăшласа пăхмалли те çук мар. Выранти халăхшăн, унăн ырлăхпурлăхĕшĕн ытларах çине тăрса ĕçлеме тивет.

Ĕçлессишĕн кăна ĕçлемелле мар. Тĕп тĕллевре производствăна малалла аталантарса пырасси, туса кăларакан е туса илекен продукци калăпăшне ÿстересси, тăкаксене чакарасси, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелесси пулмалла. Ку енĕпе инвестицисен илĕртÿлĕхне тивĕçтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Укçа-тенкĕ хывса бизнеса, производствăна аталантарма, çынсем валли ĕç вырăнĕсем туса пама хатĕррисем валли лайăххах майсем туса памалла, вĕсене пулăшса пымалла. Ку тĕлĕшпе ирĕклĕ çĕр лаптăкĕсем çинчен тĕплĕн пĕлтерекен даннăйсен пĕрлехи базине туса хурас ĕç пырать. Административлă процедурăсене туса ирттермелли вăхăта кĕскетес тĕллевпе строительство ĕçĕсем пурнăçлама ирĕк илмелли «çул карттине» туса хатĕрленĕ. Бизнес аталанăвĕ валли инвестици площадкисем, информаци карттисем кирлĕ. Акă иртнĕ çул «Çеçпĕл» предприятире, «Путь Ильича» агрофирмăра пысăк инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртме тытăннине ырăпа палăртмалла.

Унчченхи вăхăтра производство сферинче тĕллевлĕ программăсемпе ĕçлесе пынă. Малашне аталанăвăн патшалăх программисем малти вырăна тухаççĕ. Çак программăсене хутшăнса производствăна аталантарса пырасси пирки ытларах шухăшламалла. Çĕр-шыв пĕтĕм тĕнчери суту-илÿ организацине кĕнĕ май вара тĕнче стандарчĕсене тивĕçтерекен пахалăхлă продукци туса хатĕрлессин пĕлтерĕшĕ каламасăрах паллă.

Çĕнĕ технологисене анлăраххăн пурнăçа кĕртесси, тăкаксене чакарасси, ĕç тухăçлăхне ÿстересси малти вырăна тухать. Çакна вара паян пысăк опытлă, ăста кадрсемсĕр татса пама май çук. Çавна май кадрсем вĕрентсе хатĕрлесси нихăçанхинчен те актуаллăрах пулса тăрать. Çавăнпа та эпир Чăваш ял хуçалăх институтĕпе, Чăваш патшалăх университечĕпе йĕркелесе пыракан хутшăнусене малашне те аталантарма шухăшлатпăр. Хăйсен предприятине аталану çулĕпе илсе пырас, ĕçлекенсен пĕлĕвĕпе ăсталăхне ÿстерес, тивĕçлĕ ĕç укçи илме майсем туса парас тесен вара вĕсен ертÿçисен те тимлени кирлĕ.

Пĕчĕк предпринимательствăна аталантарассине çĕр-шыв шайĕнче пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ку енĕпе тĕрлĕ программăсем пурнăçланаççĕ. Çак ĕçрен эпир те айккинче тăмастпăр. Районта бизнес-инкубатор йĕркеленĕ. Хăйсен ĕçне-хĕлне пуçласа тытăнакансем, производство йĕркелес кăмăллисем вăхăтлă та тивĕçлĕ пулăшăва тивĕçеççĕ.

Республика Пуçлăхĕ бюджет сферинче вăй хуракансен ĕç укçи шайне ÿстерсе пырасси çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Халăх сыхлавĕн, вĕрентÿ, культура сферисенче ĕçлекенсен шалăвне тапхăр-тапхăр палăрмалла ÿстерме пăхнă. Ку ĕçе иртнĕ çулах тытăннă, вăл кăçал малалла тăсăлĕ.

Сывлăха сыхлас ĕçе модернизацилессин программи ăнăçлă пурнăçланса пырать. Акă «Земство тухтăрĕ» федераллă программăпа района иртнĕ çул 7 çамрăк специалист килчĕ. Çакă район больницине врачсен кадрĕсемпе туллин тивĕçтерме май пачĕ. Асăннă программăпа района татах 2 – 3 специалист йышăнма пăхатпăр.

Михаил Игнатьевăн Указне пурнăçласа районта çитес 3 çул хушшинче 3 фельдшерпа акушер пункчĕ ĕçе кĕртме пăхнă. Шомикри ФАП кăçалхи июль уйăхĕнче хута каймалла. Асăннă объект патне çул туса çитерессин, ăна шывпа, газпа тивĕçтерессин ыйтăвне вара пирĕн хамăрăн татса пама тивет.

Сывă пурнăç йĕркине çирĕплетсе пырассипе Çырура пысăк тĕллевсем палăртнă. Майсем çук мар. Районта ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсем иккĕ, паянхи ыйтусене тивĕçтерекен физкультурăпа спорт комплексĕ те пур. Çапах та республика Пуçлăхĕ халăха спортпа туслашма явăçтарас, сывă пурнăç йĕркин пĕлтерĕшне тата унăн уссине ăнлантарас енĕпе тăвакан ĕç пахалăхне татах та çÿллĕрех шая çĕклемелли палăртать. Спортпа туслашасси, массăллă спорт шкул ачисемшĕн кăна мар, халăхăн анлă массисемшĕн те кулленхи пурнăç норми пулса тăмалла. 3 çул хушшинче шкул çулĕнчи кашни иккĕмĕш ачанах ачасемпе çамрăксен спортне явăçтарма тĕллев палăртнă. Кунпа пĕрлех Михаил Игнатьев хăшпĕр спорт организацийĕсенче ĕç çине çиелтен пăхнине те палăртмасăр иртмерĕ. Ăна та шута илес пулать.

Уйрăм ыйту – алкоголизмпа, пирус туртнипе кĕрешесси. Кунта чару мелĕ кăна çителĕксĕр. Ăнлантару, пропаганда, профилактика ĕçĕсене вăйлатни кирлĕ. Çак йăласен сиенне çамрăксем ачаранах ăса хывса ÿсчĕр.

Вĕренекенсене професси пĕлĕвĕ парассин тытăмне улшăнусем кĕртмелле. Хальхи ĕç рынокĕнче кирлĕ специалистсене шкул çулĕсенчех хатĕрлеме пуçăнасси малти вырăнта пулмалла. Çавна май шкулсенче инженер, конструктор класĕсем йĕркелессине, математикăна тарăнрах вĕрентессине пăхса хумалла. Акă халĕ республикăри шкулсенчен вĕренсе тухакан, патшалăх пĕрлехи экзаменĕнче математикăпа тата физикăпа 75 е унтан та ытларах балл пухнă тата республикăри професси пĕлĕвĕ паракан учреждение вĕренме кĕнĕ çамрăксене хушма стипенди параççĕ.

Республика Пуçлăхĕ 2013 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3 çултан пуçласа 7 çула çитичченхи ачасене, 2015 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăк çурăран тытăнса 7 çула çитичченхи ачасене ача сачĕсене вырăнсемпе тивĕçтерме палăртать. Çак задачăна пурнăçлас тĕлĕшпе çине тăма тивет. Хальхи вăхăтра Муркашра, Мăн Сĕнтĕрте ку ыйту актуаллă шутланать. Шкул çулне çитмен ачапăча учрежденийĕсене вăхăтра хута ярассипе çак ĕçсене пурнăçлакан подрядлă организацисемпе те çирĕпрех пулма тивет. Çĕнĕ ача сачĕсем хута ярассипе пĕрлех пуррисемпе эффективлă усă курасси, май пур çĕрте хушма ушкăнсем йĕркелесси пирки те манмалла мар.

2020 çул тĕлне Раççейре хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма шухăшлакан çемьесен 60 процентне пурăнма юрăхлă тата хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерме палăртнă. Пирĕн районта та çуллен çурт-йĕр чылай хута каять. Нумай ачаллă çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе, сахал хутлă тата эконом класлă çурт-йĕр тăвассипе тимлемелле. Çакă чи малтанах сахал тупăшлă çемьесене хваттер ыйтăвне татса пама пулăшĕ. Выранти влаç органĕсен çурт-йĕр лартмалли территорисене комплекслă майпа алла илмелли программăсем туса хатĕрлесе йышăнмалла.

Уйăрса паракан çĕрсемпе тĕллевлĕ, пĕлсе усă курнин пĕлтерĕшĕ пысăк. Тÿнтерле пулăмсем вара районта та тĕл пулаççĕ. Акă Юнкă тăрăхĕнче пай çĕр лаптăкĕсене кайран сутса услам тăвас тĕллевпе туяннин тĕслĕхĕсене тупса палăртнă. Вырăнсенче ку тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнни кирлĕ. Çĕр вăл – пирĕн пуянлăх. Унпа никама та мĕнле май килчĕ апла усă курма памалла мар. Эпир çĕр айĕнчи усăллă япаласемпе пуян регион шутне кĕместпĕр. Апла пулсан пирĕн çĕре хаклама пĕлмелле.

Михаил Васильевич палăртнă тăрăх 2015 çул тĕлне граждансен 90 процентран кая мар йышĕ хăйсем пурăнакан вырăнта пĕр «чÿрече» йĕркепе пулăшу илме тытăнмалла. Патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе тивĕçтерекен нумай функциллĕ кун пек центра район администрацийĕн çуртĕнче те йĕркеленĕ ĕнтĕ. Малашне вара ял тăрăхĕсенче тĕслĕх библиотекăсенче кун пек нумай функциллĕ центрсем йĕркелес, çынсен ыйтăвĕсене вырăнсенче тивĕçтерме тытăнас задача тăрать.

Пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн пысăк датăсем çитсе килнине палăртрĕ республика Пуçлăхĕ. Шупашкар хулине йĕркеленĕренпе 550 çул, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитет. Раççей Президенчĕ кун пирки ятарлă Указ та йышăнчĕ. Юбилей датисене тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн пирĕн те, Муркаш районĕнче пурăнакансен, кашнийĕнех тивĕçлĕ тÿпе хывмалла. Кунсăр пуçне 2013 çула Раççейре Тавралăха хÿтĕлемелли çулталăк тесе палăртнă. Тăван çут çанталăк, тăван тавралăх ăнлавсем кашнин чĕринчех, кашнин чунĕнчех пулмалла. Михаил Васильевичăн Çырăвĕнчи «Тăван çĕр-шыв ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлер, саккуна пăхăнса, таса чунпа пурăнар» сăмахĕсем пирĕнтен кашнинех пырса тивеççĕ. Пирĕн пурнăç малашне мĕнле пуласси ытларах никамран та мар, чи малтанах хамăртан, хамăрăн кашни шанса панă ĕç участокĕнче мĕнле ĕçленинчен килет. Çакна манас марччĕ. Ытларах енĕпе Муркашсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăнă. Малашне те ку çаплах пултăрччĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

# Ял çыннисене пырса тивекен ыйтусемпе

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Е тата çакăн пек тĕслĕхсене илер. Енчен те пĕлтĕр кам та пулсан мĕн те пулсан (çурт е машина тата ытти те) сутрĕ пулсан, çав куçман пурлăх сирĕн харпăрлăх шутланнăранпа 3 çул çитеймен пулсан, сирĕн апрелĕн 30-мĕшĕччен налук инспекцине деклараци тăратмалла. Çав документа тăратмарăр пулсан, штрафĕ пĕчĕккех мар – 1 пин тенкĕ. Ăна вара тÿлемех тивет. Енчен те эсир сутнă пурлăхăр сирĕн харпăрлăхра 3 çул ытла пулнă пулсан деклараци тăратма кирлĕ мар.

Камăн деклараци тăратмалла – вĕсен спискĕ хăвăр ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче пур. Ан ÿркенĕр: ытлашши укçа кăларса пăрахас мар тетĕр пулсан ыйтса пăхнине, интересленнине нимĕн те çитмест.

Ял тăрăхĕн аталанăвĕ, паллах, выранти бюджетра укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ пулнинчен нумай килет. Çĕрпе куçман пурлăх налукĕсем шăпах харпăр хăй тăвакан укçа-тенкĕ шутне кĕнине шута илсен налуксем вăхăтра тÿленин пĕлтерĕшĕ пысăккине хăвăрах лайăх ăнланатăр. Район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената Ананьева каланă тăрăх иртнĕ çул ял тăрăхĕсем хăйсен бюджетĕнчи укçа-тенкĕн 23,8 процентне хăйсем тунă. Çапла вара харпăр хăй тунă укçа-тенкĕ вăтамран районĕпе кашни çын пуçне 834 тенкĕпе танлашать. Ку сумма кашни ял тăрăхĕнче тĕрлĕрен: 325 тенкĕрен (Ярославка ял тăрăхĕ) пуçласа 3 пин тенкĕрен (Москакасси ял тăрăхĕ) иртекенни те пур. Ял тăрăхĕсенче харпăр хăй тунă тупăш шайĕ ÿссе пынипе иртнĕ çул Муркаш районĕн кăтартăвĕ республикăра чи лайăххи пулнине палăртрĕ Рената Иосифовна.

Канашлура финанс пайĕн пуçлăхĕ çавăн пекех бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине тапхăрăн-тапхăрăн ÿстерсе пырас ыйту çинче те тĕплĕн чарăнчĕ. Ытларах культура ĕçченĕсем çинче чарăнчĕ, мĕншĕн тесен культура учрежденийĕсем шăпах ял тăрăхĕсем çинче тăраççĕ.

Культура ĕçченĕсем тенĕрен, район администрацийĕн пуçлăхĕ çакна палăртсах каларĕ. Çитес вăхăтра ял тăрăхĕсенче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем халăх умĕнче иртнĕ çул тунă ĕçсем çинчен отчет тăваççĕ. Çак ĕçе информаципе культура центрĕсен ертÿçисем те туса ирттерĕç çав тĕл пулусенче.

Ял çыннисене тĕрлĕ ыйту канăç памасть. Вĕсенче чи çивĕччи – пай çĕрĕсемпе ĕçлес ыйту. Канашлура Ростислав Николаевич хăйсене кирлĕ мар шутланакан çĕрсене ял тăрăхĕсем çине куçарас ыйту çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Ку ĕçе июлĕн 1-мĕшĕччен вĕçлемелле палăртрĕ.

– Ку ыйту мĕнле пурнăçланнине куçран вĕçертместпĕр, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ. Кашни тунти кун эрне хушшинче мĕнле улшăну пулнине ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен район администрацийĕн çĕр тата пурлăх хутшăнăвĕсен пайне пĕлтерсех тăмалла.

Тепĕр çивĕч ыйту вăл – çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха çĕнетсе улăштармалли фонд условийĕсем тавра пулчĕ. Çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту пулнине çакă та çирĕплетсе парать. Район нумай хваттерлĕ çуртсене юсамалли тата çынсене кивĕ авариллĕ çуртсенчен çĕннине куçарас программăсене хутшăнасси йăлтах асăннă фонд условийĕсене пурнăçланинчен килет. Канашлура маларах тунă ăшăпа тивĕçтермелли схемăсене çирĕплетес, шывпа тивĕçтермелли çакнашкал схемăсене туса çирĕплетес тавра та анлă калаçу пулчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ çавăн пекех нумай хваттерлĕ çуртсем вырнаçнă çĕр лаптăкĕсене кадастр учетне тăратассине хăвăртлатмаллине палăртсах каларĕ. Хăçан çак ĕçе вĕçлеме пултарнине вăхăтне палăртмалли çинчен каларĕ. Нумай хваттерлĕ çуртсем районти 8 ял тăрăхĕнче пур. Асăннă сферăна çĕнетсе улăштармалли программа ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем умне çĕнĕ задача лартма та хистет: 2016 çулччен коммуналлă сферăн мĕн пур инженери сечĕсене харпăрлăха памалла.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ çавăн пекех февралĕн 28-мĕшĕччен Ярославка тата Ярапайкасси ял тăрăхĕсенчи нумай хваттерлĕ çуртсене малалла кам ертсе пырас ыйтăва татса памаллине палăртрĕ.

Канашлура çавăн пекех Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăн Патшалăх Канашне янă Çырăвне те пăхса тухрĕç.

Канашлу хыççăн Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи социаллă объектсене çитсе курчĕç, «2013 çулхи спорт вăййисемлĕ хĕл» спорт уявне хутшăнчĕç.

**Л. ТУКТИНА.**

## Саламлатпăр



Юратнă аттепе аннене, кукаçипе кукамая, асаттепе асаннене, хăтапа тăхлачăна – Çĕнĕ Матьăк ялĕнче пурăнакан **Юлия Петровнăпа Геннадий Миронович МИРОНОВСЕНЕ** çирĕп çемье çавăрса çур ĕмĕр алла-аллăн тытăнса килĕштерсе пурăннă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Эсир пирĕншĕн – ырă тĕслĕх, эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр, пире пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр.

Каç пулсан – канăçлăхпа, ир пулсан – пуласлăхпа пурăнма, Атăл шывĕ пек вăрăм кун-çуллă пулма сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: икĕ хĕрĕ, икĕ ывăлĕ, кĕрÿшĕ, кинĕсем, 7 мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем.**



Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра – Муркаш салинче пурăнакан **Алевтина Александровна ПЕТРОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Тумхахсăр кун-çул, çирĕп сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Ырă кăмăлушăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн тайма пуç.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрÿшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Исетеркке ялĕнче пурăнакан **Мария Егоровнăпа Дмитрий Алексеевич АЛЕКСЕЕВСЕМ** февралĕн 23-мĕшĕнче хăйсен ылтăн туйне паллă турĕç. Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăрсене çак паллă кунпа ăшшăн саламлатпăр.

Сирĕн пĕрле утас çулу вăрăм та такăр пултăр, Турри вăй-хал парса тăтăр, чирчĕртен упратăр. Малашне те ачăрсемпе, мăнукăрсемпе, тăвансемпе савăнса та килĕштерсе пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр сире. Пире пулăшса тăнăшăн, çемье ăшшине упраса пурăннăшăн чĕререн тав тăватпăр. Эсир пурри пирĕншĕн пысăк телей, савăнăç.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

# Старта йĕлтĕрçĕсем тухаççĕ

## Спорт афиши

**Мартăн 2-мĕшĕнче Ю. Федотова асăнса ирттерекен йăлана кĕнĕ республика ăмăртăвĕ 11-мĕш хут Калайкассинчи вăтам шкулта иртет.** Унта шкул ачисен тата учительсен командисене хутшăнма йыхравлаççĕ. Йĕркелӳçĕсем ăмăртăва «Çамрăксем пируссăр тата наркотиксăр!» девизпа çыхăнтарнă.

Эстафета йĕрки çапла: 1-мĕш ушкăнра 1997–1998 çулсенче çуралнă (8–9 классем) 2 хĕр ачапа 2 арçын ача 2 тата 3 çухрăм дистанцисене каяççĕ. 2-мĕш ушкăнра – 1995–1996 çулсенче çуралнисем çавăн пек дистанцисенчех тупăшаççĕ. 3-мĕш ушкăнра – учительсен командисем: 2 хĕрарăм (пĕри 35 çултан çамрăкрах, тепри 35 çултан аслăрах) тата 1 арçын. Учительсен командисенче физкультура учителĕсен е тренерсен шучĕ икĕ çынран ытла пулмалла мар. Шкул ачисен командисен кăтартăвĕсем вĕсен спартакиада зачетне каяççĕ.

**Районти шкул ачисен спартакиадин иккĕмĕш кунĕнче – мартăн 3-мĕшĕнче – йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсем Муркашри В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн йĕлтĕр базинче иртеççĕ.** Спартакиадăна кăçал шкул 40 çул тултарнине халалланă. Тĕп шкулсен (3 хĕр ачапа 3 арçын ача) тата вăтам шкулсен (6 хĕр ачапа 6 арçын ача) командисен тĕрлĕ ӳсĕмсенче ăмăртаççĕ: 1995–1996 çулсенче çуралнисем (яшсем 10 çухрăм, хĕрсем 5 çухрăм), 1997 çулта çуралнисем тата кĕçĕнреххисем (арçын ачасем 5 çухрăм, хĕр ачасем 3 çухрăм).

**Ĕç коллективĕсен спартакиади шучĕпе мартăн 3-мĕшĕнче районти организацисемпе предприятисен, учреждениесен тата ял тăрăхĕсен ĕç коллективĕсен командисен йĕлтĕр йĕрĕ çинче вăй виçĕç.** Командăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ 4 чи лайăх результатран килет. Çавăнпа та командăра 2 хĕрарăмран (3 çухрăм) тата 2 арçынран (5 çухрăм) сахал пулмалла мар.

Ăмăртусем 10 сехет çурăра пуçланаççĕ.

**Район администрацийĕн спортпа туризм секторĕ.**

## Спорт

# «Рэмисс» çĕнтерчĕ

Муркашра çулсерен «Росгосстрахăн» кусса çӳрекен кубокне çĕнсе илессипе иртекен ăмăрту республика шайĕнчен регион шайне ӳсрĕ. Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне волейбол вăййинче вăй виçме Йошкар-Ола, Козьмодемьянск, Хусан, Шупашкар хулисенчи командăсем те килсе çитрĕç. Хĕрӳ вăйăсенче Шупашкарти «Старко» виççĕмĕш вырăна тухрĕ, пирĕн районти «Передовик» иккĕмĕш пулчĕ, пĕрремĕш вырăнта вара – Шупашкарти «Рэмисс». Ăмăрту пирки тĕплĕнрех – çитес номерте.

# Виççĕмĕш вырăнта

Пирĕн районти шкул ачисем республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчи ăмăртусене хутшăнма тăрăшаççĕ. Спорта хăвăн тантăшусемпе вăй виçсен тин харпăр хăйĕн вăй-халне тĕрĕс хак пама пулать-çке-ха.

Акă иртнĕ кунсенче Муркашри вăтам шкулта вĕренекен Сергей Белов Канаш районĕнче иртнĕ йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне çитсе килчĕ. 2001 çулта çуралнисем хушшинче ăмăртса вăл виççĕмĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Çĕнтерӳçĕ яланах хавхалану парнелеççĕ. Çамрăк спортсменăн вара çакăнпа пĕрлех алăра кубок та, диплом та, укçан панă парне те пулчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Иван Григорьевич АШМАРИН



Февралĕн 24-мĕшĕнче нумай çул Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрти Свято-Троицки чиркĕвĕн настоятелĕ пулнă, Пĕтĕм Раççейри библи обществин Санкт-Петербургри членĕ Иван Григорьевич Ашмарин йывăр чирленĕ хыççăн 81 çула кайса пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

И.Г. Ашмарин 1933 çулхи январĕн 24-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче çуралнă. Патăрьел районĕнчи Тăрăн шкулĕнче 7 класс вĕреннĕ. 1948 çулта вăл хорист пулнă. 1948–1964 çулсем – Патăрьел районĕнчи Тăрăн чиркĕвĕн дирижерĕ. 1964 çултан пуçласа 1991 çулсенче Вăрмар тата Шупашкар районĕсен священникĕнче ĕçленĕ. 1991 çултан пуçласа вара Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрти Свято-Троицки чиркĕвĕн настоятелĕ пулнă.

Иван Григорьевич Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕн священникĕ пулнă май Муркаш районĕн аталанăвне палăрмăлă йĕр хăварчĕ. Асăннă чиркĕве çĕнетес, унăн ĕçне йĕркелес, унăн ятне-сумне çĕклес тесе нумай тимлерĕ. Ку çеç те мар. Районти ытти чиркӳсене çĕнĕрен йĕркелесе яраccишĕн те тăрăшрĕ. Çак ĕçе йăлт саккунпа килĕшӳллĕн мĕнле кирлĕ çавăн пек йĕркелесе яма пулăшрĕ, ăнлантарчĕ.

И.Г. Ашмарин общеcтвăлла деятель пулнă май православи тĕнĕн пĕлтерĕшĕ ĕненекенсен пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине тĕне ĕненекенсем патне çитерме пĕлетчĕ. Турра ĕненни çынна ытларах ырă ĕçсем тума пулăшнине, пĕрпĕрне хисеплеме, йывăр вăхăтра пулăшма христиане халăх патне çитерме тăрăшатчĕ. Чиркӳн тĕллевĕсемпе задачисене çынсем ăнланчăр тенипе пĕрлех ăнлантару ĕçĕнче чиркӳпе гражданла обществă хушшинчи çыхăнăва тĕрĕс кăтартма пĕлетчĕ.

Иван Григорьевич – питĕ пултаруллă дипломатчĕ. Вăл çынсен кăмăлтуйăмне ăнланма, курма пĕлетчĕ. Хăйĕн патне пулăшу ыйтма пынă кашни çынна пулăшма май тупатчĕ, кашнин валли ăшă та вырăнлă сăмах пурччĕ унăн, тĕрĕс те кирлĕ сĕнӳсем паратчĕ. Çынсем Иван Григорьевич патне туртăнатчĕç, ун патне пулăшу, сĕнӳ ыйтма пыратчĕç. Çавăнпах ĕнтĕ унăн халăх хушшинчи авторитечĕ те питĕ пысăкчĕ, çынсен шухăш-кăмăлне ăнланатчĕ. Ырă кăмăллă пулнăран ĕнтĕ халăх хушшинче унăн тус-юлташ та сахал марччĕ.

Эпир Иван Григорьевичăн çемйипе, сывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр. И.Г. Ашмарин пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ пулсан та, унăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн чĕресенче упранĕ. Унăн ырă ячĕ, унăн сĕнĕвĕсем пире малалла та ытларах ырă ĕçсем тума хавхалантарса пырĕç.

**Муркаш районĕнчи депутатсен Пухăвĕ, Муркаш район администрацийĕ.**

## Тав тăватпăр

Катăкуй ялĕнче пурăннă Олег Геннадьевич Васильева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн «Свобода» ял хуçалăх администрацине, тăвансене, ял-йыша, пускилсене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Васильевсен çемйи.**




**ТЕПЛИЦЫ**
**от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д.**
**Телефоны: 8-917-651-00-76 8-927-858-28-79.**

**Бурение колодцев, колодезные кольца. Доставка, установка.**
**Тел.: 8-927-668-96-96. 1-3.**

## Итоги аукциона

Администрация Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает, что по итогам аукциона, проведенного 15.02.2013 года (объявленного 16.01.2013 года в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» № 2 (8068) на право заключения договоров аренды нежилых помещений, находящихся по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, 32,

победителями признаны:

Лот № 1 – Общество с ограниченной ответственностью «Межрегиональный Центр Финансирования», предложивший наибольшую цену;

Лот № 2 – аукцион признан несостоявшимся в виду отсутствия заявок;

Лот № 3 – Капирова Лариса Анатольевна, предложившая наибольшую цену;

Лот № 4 – ИП Тимофеев Алексей Николаевич, предложивший наибольшую цену;

Лот № 5 – Матросов Юрий Николаевич, предложивший наибольшую цену;

Лот № 6 – Чугаров Юрий Федорович, предложивший наибольшую цену.

Полную информацию об итогах аукциона можно получить в администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района, расположенной по адресу: с. Большой Сундырь, ул. Советская, д. 16, тел.: 69-3-01.

Администрация Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает, что открытый аукцион, проведенный 15.02.2013 года (объявленного 16.01.2013 года в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» № 2 (8068) на право заключения договора аренды по объектам недвижимого имущества «Комплекс водоснабжения и водопроводные сети», находящегося в муниципальной собственности Большесундырского сельского поселения, признан несостоявшимся в связи отсутствием заявок.

Полную информацию об итогах аукциона можно получить в администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района, расположенной по адресу: с. Большой Сундырь, ул. Советская, д. 16, тел.: 69-3-01.

**ООО «ВИКТОРИЯ»**
*** Представительство в судах всех инстанций.**
*** Составление договоров, претензий, исковых заявлений.**
*** Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков.**
*** Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.**
*** Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП, внесение изменений.**
*** Ведение бухгалтерского учета, составление отчетности.**
*** Кадровое делопроизводство.**
*** Бизнес-консультации.**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119. Тел.: 62-4-43.; г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.**
**E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА Brusbox от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Закажите зимой окна в рассрочку, установим весной. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-937-955-33-00, 8-917-662-71-64. 7-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 5-30.




## Прогноз погоды

| | среда 27 февраля | | | | четверг 28 февраля | | | | пятница 1 марта | | | | суббота 2 марта | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -6 | -4 | -8 | -13 | -13 | -14 | -10 | -8 | -2 | -3 | 0 | -3 | -2 | -9 | -9 | -15 |
| Давление мм | 742 | 738 | 740 | 743 | 745 | 745 | 738 | 732 | 729 | 728 | 725 | 725 | 725 | 732 | 736 | 740 |
| Влажность % | 82 | 91 | 60 | 80 | 73 | 83 | 80 | 90 | 91 | 96 | 82 | 89 | 94 | 86 | 73 | 79 |
| Ветер м/сек | 8 | 8 | 9 | 8 | 6 | 3 | 8 | 6 | 5 | 5 | 7 | 6 | 7 | 6 | 4 | 4 |
| | З | З | С | С | С-З | З | Ю-З | Ю-З | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | С | С | С |
| Солнце восход / заход | | 07:47 | 18:23 | | | 07:45 | 18:25 | | | 07:42 | 18:27 | | | 07:39 | 18:29 | |
| Луна восход / заход | | 20:50 | 07:47 | | | 22:11 | 08:06 | | | 23:32 | 08:28 | | | - | 08:54 | |

**Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL HD. Триколор – 7000 руб. Телекарта – 3000 руб. Карты «Кинозал» со скидкой – 250 руб.**
**Тел.: 8-906-385-29-30. 10-10.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 9-10.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**БЕТОН, РАСТВОР всех марок. Доставка. Дешево. Тел.: 8-927-668-87-78. 1-43.**

**Продаем окна деревянные любого вида и на заказ, двери деревянные (массив).**
**Тел.: 8-906-388-66-04, 8-905-341-02-86. 14-15.**

***

**Продаю улья, 16-рамные, с магазинной надставкой, новые. Цена договорная. Тел.: 8-965-689-51-19.**

***

**Тюклану утă сутатăп. Тел.: 64-3-49.**

***

**Закупаю молочных телят, овец, быков по хорошим ценам. Тел.: 8-905-343-46-23. 3-4.**

***

**11 уйăхри хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 7-905-028-43-93, 7-937-394-36-94, 60-8-62.**

**ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-927-668-84-40. 1-43.**

Коллектив Большесундырского райпо выражает глубокое соболезнование бухгалтеру Воробьевой Т.И. и товароведу Воробьевой Н.И. в связи с тяжелой утратой – смертью матери

**ВОРОБЬЕВОЙ**
**Феофилы Яковлевны,**

ветерана райпо.

Чуманкассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта повара ĕçленĕ

**Ирина Петровна**
**АРТЕМЬЕВА**

нумай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**
**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**
**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.**
**Пичете панă 26.02.2013 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4891.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.